# ТАТЬЯНА ШАРКОВĂН ВИÇĔ ХĔВЕЛĔ

**Яп-ялтăркка ука пек пурçăн,**
**Тĕрленĕ пĕрчĕн суйласа.**
**Чăваш малашлăхĕ те пур çав,**
**Ун ĕмĕчĕ хитре, таса.**

ÇАПЛА çырнă Чăваш халăх поэчĕ Петĕр Хусанкай 1926 çулта «Чăваш тĕрри» сăвăра. Арçын кĕпи çинчи эрешсем тыткăнланă-ши ăна е хĕрарăм кĕски, е пит шăлли çинчи тĕреллĕ çырулăх... Вăл та, ку та пулĕ. Кашнийĕнче – пирĕн несĕлсен палли, ăрусенчен тепĕр ăрăва куçса пынă пуянлăх, тĕрĕ философийĕ. Ахаль çыншăн тĕрĕ – куçа илĕртекен асамлăх, илем. Искусствоведсемпе ятарлă специалистсем вара унра эпир палăртма мехел çитерейменнине, чăваш тĕнчине тытса тăракан вăя палăртаççĕ. Пĕрре пăхсан питĕ ансат пек туйăнакан чăваш тĕрри ытла та тарăн «тымарлă» /хамăр утса тухнă çул-йĕр пекех/ иккен. Куçпа киленнĕ хушăрах ăна «вулама», çĕр-çĕр, пин-пин çул каялла йăх пуçламăшĕнче тăнă çынсен кăмăл-шухăшне, вĕсене мĕн канăçсăрлантарнине пĕлме пулать. Анчах пирĕн тĕлте ан чарăнса лартăрччĕ аталану. Тата темиçе ĕмĕр иртсен те çак эрешсем çĕн чăвашсене тыткăнлама ан пăрахчăр. Çапла пултăр тесе тăрăшнă та мăн-мăн асаннесемпе ун хыççăн килнĕ тăванăмăрсем. Чăваш тĕррине ятарласа тĕпченĕ. Сăмахран, иртнĕ ĕмĕрĕн иккĕмĕш çуррине çак ĕçе хăйĕн пурнăç тĕллевĕ вырăнне хунă Раççей тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх художникĕ Екатерина Ефремова. Шел, виçĕ çул каялла вăл пирĕнтен уйрăлса кайрĕ. Анчах та Екатерина Иосифовнăн вĕренекенĕсем ун ĕçне малалла тăсаççĕ. Сăмахăм ЧР культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ Татьяна Шаркова пирки. Асăннă ӳнерçĕн, ылтăн алăллă асамçăн алли витĕр тухнă ал шăллисем, сĕтел çиттисем, паннăсем, ытти хатĕрсем тĕрлĕ куравсенче яланах чи сумлă вырăнта.



– Шел, питĕ кая юлса уçрăм эпĕ хам валли Татьяна Шарковăн этнопедагогика эрешĕн философине, – тесе çырать Геннадий Волков академикĕмĕр. – Паян вара, ятарлă специалист-искусствовед пулмасан та, унăн пĕр ĕçĕпех Татьяна Васильевнăн /Танюкăн/ пултарулăх биографине уçса пама пултарнă пулăттăм...

Ăçтан илтĕм-ха çак йĕркесене? Нумаях пулмасть Татьяна Шаркова-Изратова ӳнерçĕн, тĕрĕ ăстин пурнăçĕпе, пултарулăхĕпе паллаштаракан «Три солнца Татьяны Шарковой» альбом каталог кун çути курчĕ. Шăпах çакăнта вырăн тупнă та ентешĕмĕрĕн, Раççейри чи паллă этнопедагогăн пил сăмахĕ вырăнне çырнă тишкерӳ статйи.

Чăваш тĕррисем тĕс вăйлипе палăрса тăнине асăнать статья авторĕ. Авалхи тĕрĕсенчи ӳкерчĕксен çыпăçулăхне итальянсен чаплă картинисемпе танлаштарать. Паянхи эрешсенче те упранса юлнă çак пахалăхсем. «Тĕслĕх вырăнне Татьяна Шарковăн парнинех илем», – тет Геннадий Никандрович.

Мĕн парнеленĕ-ха Танюк хăйĕн амăшĕн тăванне, эпир пурте лайăх пĕлекен академикĕмĕре? «Унран хитре ал шăлли тĕнчере урăх çук пулĕ. Ӳкерчĕксем питĕ кăткăс. Тĕп вырăнта – виçĕ кĕскĕ, пурнăç паллин хĕвелĕсем. Чăвашсен виçĕ хĕвел пулнă, иккĕшне – сухатнă. Çакскерсене каялла тавăрсан чăвашсен шăпи телейлĕ пулĕ. Виççĕ – килĕшӳлĕхĕн таса палли, – çакăн пек пĕтĕмлетӳ тăвать ăсчахăмăр. – Чăваш тĕрри – ку юрату е юрату пирки пĕлтерни, ку юрату юрри... Çакă та пĕтĕмпех мар-ха. Ку – тĕн те, ĕненӳпе шанчăка пĕрлештерсе юратăва çавăраканни те. Чăваш тĕррин биоэнергийĕ мĕне тăрать. Хăшĕсем **масмак** – пуç ыратнине, **кĕскĕ** – чĕре, **сурпан** чун ыратăвне иртерсе яни пирки манса та кайнă пулĕ... Чăваш халăхĕн пултаруллă хĕрĕ хăй валли виçĕ хĕвел тупнă, çакă хăйĕн телей тĕнчине уçнипе танлашать. Татьяна-Танюка тăван халăха хăйĕн телейĕн виçĕ хĕвелĕ патне тавăрма пулăшма пехил паратăп».



Çак сăмахсем çумне урăх нимех те хушса каламалли çук. Çакна çеç пĕлтерем: альбом каталогра çавăн пекех искусствоведени докторĕ А.А.Трофимов, Раççей тава тивĕçлĕ, Чăваш халăх художникĕ Е.И.Ефремова, А.П.Хусанкай ăсчах, ытти паллă çынсем Татьяна Шарковăн пултарулăхне тишкерсе хак панă. Кунтах асамçă Танюкăн ĕçĕсемпе киленнĕ май çуралнă сăвă çаврăмĕсем: Николай Исмуков, Геннадий Айхи, Раиса Сарпи, Светлана Асамат, Михаил Сунтал, Георгий Ирхи çырнă йĕркесем. Çавăнпа пĕрлех, çакă чи пахи пулĕ, кĕнекере тĕрĕ ăстин чи чаплă ĕçĕсемпе паллашма пултаратпăр. Чаршав, сĕтел çи витти, «Манăн Чăваш Ен» пит шăлли, «Иккĕн, Таврăну», «Аваллăх çыхăнăвĕ», «Телей кайăкĕ», «Амăшĕ. Пирĕшти», «Чăваш вăйă карти» тата ытти паннăсем кирек кама та тыткăнлама пултараççĕ.

Çапла Татьяна Шаркова хăйĕн виçĕ хĕвел тĕнчинчи çуттипе, ăшшипе пире те ырăлăх, телей кӳрет.

**Надежда СМИРНОВА.**

**• ТАТЬЯНА ШАРКОВĂН ĔÇĔСЕМ.**